# Тĕнчере-ши айăпĕ?..

## Черкке витĕр курăнмасть-ши ачăр куççулĕ?

***Тантăшĕсемпе урамра вылякан арçын ача лешсем сисиччен уйăлчĕ те кил еннелле утрĕ. Хырăм выççи канăç памарĕ ăна. Каçхине хытса кайнă юлашки çăкăр çине савăт тĕпĕнчи песука хырса сапса çинĕччĕ-ха. Паян, акă, вăхăт каç еннелле сулăннă пулин те, ăша пĕр татăк та кĕмен. Амăшĕ пĕр ялти икĕ хĕрарăмпа ирех эрех ĕçсе ларатчĕ. Тухса кайнă-ши вĕсем? Анне апат пĕçермерĕ-ши? – çак шухăшпа ача киле кĕчĕ. Ёмĕтленни пулмарĕ унăн. Кӳршĕ хĕрарăмĕ алăк çумнех кайса ӳкнĕрен аран-аран алăка уçса пӳрте кĕчĕ. Амăшĕпе тепĕр хĕрарăм сĕтел çумĕнче çывăраççĕ. Сĕтел çинче пушаннă сăмакун савăчĕ. Ёнер амăшĕ Муркашра туянса килнĕ темле пĕчĕк кĕленчесем 5-6 выртаççĕ. Миша вĕсене çӳп-çап витрине пăрахрĕ. Унтан амăшне кравать çине вырнаçтарас тесе тăрăшрĕ, вăйĕ çитмерĕ - ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.***

Палларăр-и ялти ӳкерчĕке? Сăнарах пăхăрха, сирĕн ялта миçе çакнашкал çемье? Халь пӳрнĕре хутлатса шутласа кайăр миçе ача вĕсенче выçă нушаланать. Тата тепĕр ыйту? Çакăн пек ăнăççăр çемьесенчи ачана пулăшас тесе эсир мĕн турăр?

Малтанлăха, тăван килĕнчех, ашшĕ-амăшĕ çумĕнчех ют йăвари кайăк пек пĕччен тăрса юлнă ачасем пирки тивĕçлĕ органсене пĕлтерни те тем пекех.

Çук, çук эпир пурте чурăс чĕреллĕ тесе калас килмест манăн. Ют ачана тăван ашшĕ-амăшĕн ăшшине парса ӳстерекенсем 55-ĕн районта. Тавах вĕсене çакăншăн. Вĕсен ытарайми ырă кăмăлне пула вĕсенче 77 ача хăйсене телейлĕ туять.

Çав хушăрах тăван ачисене эрех черккипе улăштарнисем миçен паян? Опекунсемпе пурăнакан çав 77 ачаран 36-шĕ çеç хăр тăлăхсем вĕт. Ыттисем хăйсене çуратнă ашшĕ-амăшĕсемшĕн те кирлĕ мар иккен. Тав Турра, çав ачасене ыр çынсен тĕлне пулма тӳр килнишĕн.

Анчах миçен вĕсем тата анне пĕçернĕ ăшă кукăль мĕн иккенне пĕлменскерсем? Çав паянхи кун районта учетра тăракан 153 ăнăççăр çемьери ачасем çеç-ши таса вырăн çинче тутлă тĕлĕк курса çывăрасси пирки ĕмĕтленеççĕ. Тата миçе айăпсăр чун паян ачалăх тĕнчин илемне кураймасть?

Камран пулăшу ыйтĕ паян М.А. Горшкован 5 çулхи ывăлĕ, амăшĕпе унпа пурăнакан Г. Козлов урăлаймасăр ĕçнĕ чух. Çутă çук пӳртре çĕрле киле пĕччен юлсан, кам илĕ-ши ăна хăй хӳттине? Ачи выçă ларни шухăшлаттарать-и ăна пуçа пăтранчăк шывпа минретнĕ чух. Амăшĕ хăйне питĕрсе хăварнă икĕ кун уншăн хăрушă тĕлĕкрен те хăрушă пулчĕ пулĕ. Тепĕр ачи интернатра лайăхрах пурăнать пуль, килте нушаланакан Димăпа танлаштарсан.

Атте-аннене суйламалла пулнă пулсан, Ятманти Нина Георгиевнапа Виктор Вениаминович Максимовсенех суйланă пулĕччĕ-ши вĕсен çул çитмен ывăлĕ. Суйлатчĕ пуль: ашшĕ-амăшĕ çамрăклах эрехе иленесси пирки ăçтан пĕлес-ха унăн.

Кам айăплă кăçал тата 6 ачашăн интернат тăван кил пулса тăнишĕн? Ялта эрех туса сутакансем хăйсене айăплă тесе шутласçĕ-и? Хăйсене çак шухăш аптратнă пулсан, хăйсен ачисене çур килограмм канфет илес укçана сĕнекен арçынсемпе хĕрарăмсенчен илсе юлнă укçана пăхса савăннă пулĕччĕç-ши вĕсем?

Юрать-ха, ашшĕ кăна ĕçет пулсан. Хĕрарăм пурпĕрех ачисене ура çине тăратма тăрăшать. Эх, 6 уйăхри Кирилл Ведуновăн шăпи никама та килсе ан çаптăрччĕ. Таврăнĕ-ши ун патне тĕнче касса çӳрекен амăшĕ? Анланмаллипех ăнланса илессе шанас килет. Кашмашри Е.И. Герасимовăпа Г.А. Кириллов хăйсем алла черккне тытни 7,8 çулсенчи ывăлĕсемшĕн тĕнче пĕтсе килнипех танлашнине. Катькасри Рена Григорьевапа Валерий Анатольевич Вазиковсен чĕрисем кăшт та пулин тунсăхлаççĕ-ши хăйсен ачисемшĕн. Ашшĕ-амăш прависĕр хăварни тĕрĕс пĕтĕмлетӳ патне илсе пырĕ-ши вĕсене?

Шанас килет çакна. Алла черкке тытиччен, харпăр хăйне çак ыйтăва парсамăрччĕ: "Ман ачасене кам хӳтлĕ пурнăç тумхахĕнчен? Кам?" Хăйсен ушкăнĕ патне ют çын çывхарсан, хур açипе ами мĕнле чашкарнине эсир асăрханăх ĕнтĕ. Кайăк-кĕшĕк те хăйĕн чĕппине хӳтĕлет пулсассăн, эсир мар пулсан, кам кăларĕ ачăрсене тӳрĕ пурнăç çулĕ çине. Ырăпа усала кам уйăрма вĕрентĕ. Сире эрех сутакансем-и? Иккĕленетĕп.

Кунта манăн районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачалăха хӳтĕлессипе ĕçлекен тĕп специалисчĕн И.С. Кабуркинан сăмахĕсене илсе кăтартас килет.

– 20 çул хушшинче 133 ачашăн интернат тăван кил пулса тăчĕ. Паян ашшĕ-амăшĕсем черкке еннелле туртăнакан аллисене каялла илмесен, тепĕр 20 çултан çак кăтарту тата миçе хут ӳсĕ?

Халăхра çапла калаççĕ: "Турă ача парать пулсассăн, ачашăн та парать". Чăтăмлăх паринччĕ вăл ĕçекен ашшĕ-амăшĕсене черкке енне тăсалнă аллисене каялла илме. Юратупа ырату ытларах паринччĕ вĕсене... Хăйсем çуратнă хĕр-ывăлĕсен çитĕнĕвĕсемпе савăнма, вĕсем чирленĕ чух – канлĕхе çухатма... Çапла мар-и вара шăпа чăн-чăн ашшĕ-амăшĕн?!

## Аптекăрах татиччĕç çав "вăчăрана"?

Тĕнче тенĕрен, пăтранать пулĕ паян вăл? Самани-ши айăплă паян. Çук пуль. Тĕнче мар, хамăрах пăтранатпăр. Кам мĕнле пĕлет, çавăн пек укçа тума тăрăшать.

Ёçес текен çыншăн паян спирт пур шĕвеке тупса илме йывăр мар. Ялта эрех сутакансене сан ачу выçă ларни интереслентермест.

Халĕ хăвăр тăрăхри магазинсене кĕрсе тухăр. "Ыр кăмăллă" сутуçăсем хушамат çырса хурсах укçасăрах "шуррине" тыттарса ямаççĕ-и? Çакă миçе çемьери ахăрсамана сăлтавĕ пулса тăрать? Çакнашкал сутуçăсен чун-чĕрине хĕрарăм куççулĕ (хăйсем хĕрарăм мар-ши?) ыраттарать-и? Çук пуль çав.

Шăптак Муркашри уйрăм çыннăн магазинĕнче çеç-ши çакнашкал "йĕрке" тата?

Халĕ калаçу пуçламăшĕнче асăннă пĕчĕк кĕленчесем – **антисептин** кĕленчисем çине куçар. Кĕсьери юлашки 10 тенкĕ пулсан, паян аптекăран ăна туянма пулать. Ёçекен çынсем çеç туянаççĕ-ши паян çав дезинфекци препаратне?

– Пĕр хĕрарăм паян 20 кĕленче туянчĕ,- калаçса утаççĕ хĕрарăмсем. Халĕ шухăшласа пăхăр? Кам шантарса калать паян арçынсене (эрехпе "тав тума" хăнăхнă-çке эпир?) мĕнпе те пулин пулăшнă хыççăн кӳршĕре çак ĕçме юраман препарата шывпа хутăштарса ярса памаççĕ тесе. Никам та.

– Сутма юрать пулсан, мĕншĕн ăна витринăра курма çук,- ку тепĕр хĕрарăм шухăшĕ. Ку ыйту çине халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртри аптекăра хулпуççисене çеç сиктерчĕç, Муркаш райповĕн аптекинче хурав çапла пулчĕ:

– Вăл медицина препаратăвĕ мар. Мĕншĕн витринăра лартса рекламăлас ăна?

Палăртмалла, çак дезинфекци препаратне аптекăсенче сутса унта ĕçлекенсем йĕркене пăсмаççĕ. Ку вăл документсем тăрăх. Анчах çак шĕвеке вуншар е ытларах та урăх тĕллевпе илни шухăша ямасть-ши?

Халĕ мораль енчен пăхарха çакăн çине. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартам. Иртнĕ çул районта эрехпе наркăмăшланнине пула 40 çын вилнĕ. Кăçал спирт пур тĕрлĕ шĕвеке ĕçекенсем патне васкакан вилĕм утăмне хăвăртлатрĕ: 5 уйăхра 20 çынна "леш тĕнчене" пуçтарса кайрĕ. Миçе ача тăлăха юлчĕ вĕсенче? Хĕрарăмсем те çук мар вĕт вĕсен хушшинче? Кам тăратĕ вĕсен ачисене пурнăç çулĕ çине?

Мĕншĕн "антисептин" илсе ĕçетĕр тесен, ĕçекенсем çапла хуравлаççĕ:

– Аптекăра сутаççĕ. Ёçме юрамасан, мĕншĕн сутаççĕ?

"Аптекăри" шур халатлă сутуçă-медсестрасен пур тавара сутмалла-мĕн. Ана кӳрсе килекенсем вара айăпне асăннă тавара туса кăларакансенче кураççĕ пулас.

– Туса кăларма чармалла апла пулсан "антисептина",- ку Муркаш райповĕн аптекинче илнĕ хурав.

Асăннă препарата заводра дезинфекци тĕллевĕпе кăларнă-çке. Ана мĕн тĕллевпе усă курмалли этикеткăра та курăнать.

**АВТОРТАН, ШУХАШРАН ПАРАНМАСАР**

**Халĕ шухăшласа пăхарха.**

**Тĕрлĕрен спирт пур шĕвеке паян çĕршыври гидролиз завочĕсенче нумай кăлараççĕ. Предприятисенче вĕсемпе, тĕслĕхрен, станоксене тасатнă чух усă кураççĕ. Ёçме юрамасть вĕсене.**

**Çакăн йышши шĕвексене сутассине лицензилемеççĕ те, ку тĕлĕшпе нимĕнле чикĕ те çук. Çавăнпах ĕнтĕ кирек епле фирма та хăть те мĕн чухлĕ тиесе кайма пултарать.**

**Кунта Муркаш райповĕн аптекине ертсе пыракан сăмахĕсенче те тĕрĕс шухăш пур. Çакăн пек спирт пур шĕвексене кăларассинче, чăннипех те, йĕрке туни ытлашши пулмĕ. Мĕншĕн тесен ăна паян этикеткăра кăтартнă тĕллевпе усă курма кирлĕ шутран темиçе хут нумайрах кăлараççĕ. Анчах мĕнле чикĕлемелле çакăн пек шĕвеке кăларассине, енчен те заводăн çав ĕçме юраман спирта туса кăларма лицензи пулсан? Вăл налуксене те йĕркеллĕ тӳлесе тăрать пулсан? Унпа тивĕçтерекен фирма та официалла майпа регистрациленнĕ пулсан? Вĕсем хăйсен ĕçне патшалăх ирĕкĕпе йĕркелеççĕ, анчах та вĕсем тунă ĕç халăха сиен кӳрет. Çапла вара ĕçме юраман спирт пур шĕвеке тивĕçлĕ федераллă саккун кăларсан çеç кăларма чарма пулать.**

**Налуксемпе тĕрлĕ пухусен Министерствин Управленийĕ спирта тата алкоголь продукцине саккуна пăсса сутассине хирĕç кĕрешекен уйрăмпа пĕрле спирта саккуна пăсса сутакансене "хытаракан" тата спирт пур ĕçме юраман шĕвеке кăларассине чикĕлекен федераллă саккун проектне хатĕрленĕ. Анчах та çак саккун проект пур саккунлă инстанцисем витĕр тухиччен çакнашкал ĕçме юраман шĕвеке сутасси миçе хут ӳсĕ. Тивĕçлĕ органсем çĕшывĕпе 2000 çулта çав шĕвекпе сутă тăвакансенчен 94465 литр, 2001 çулта 155130 литр туртса илнĕ. Çакнашкал шĕвеке мĕн чухлĕ сутнине тата çыннсем мĕн чухлĕ ĕçнине кам шутласа кăларĕ? Тата миçе пин çын ăна ĕçсе наркăмăшланнă, вилнĕ тата инвалид пулса тăнă? Миçен? Пирĕн районта кăна кăçал çеç çавăн чухлĕ (тĕслĕх маларах илсе кăтартнăччĕ) çын вилнĕ пулсан: кунта июньте эрехе пула пушарта вилнисене кĕртмен-ха.**

– "Антисептина" ĕçме юраманни çинчен ăна çав тĕллевпе туянакансем пĕлччĕр тесе çак икĕ аптекăна пысăк плакатсем çакрăмăр. Ана вуланă хыççăн, тен, хăшĕ те пулин туянмасăр çаврăнса утĕ, терĕмĕр,- тет районти тĕп больницăри Л.М. Иванова нарколог.

Анчах та çав плакатсем вĕсем тухса кайнă хыççăнах "тухса тарнă" аптекăсенчен.

– Çак препарата илсе килмесен те пултаратăр вĕт-ха эсир?- тетĕп.

– ...

– Пĕр çынна пĕрререн ытла памалла мар тума пултаратăр вĕт? – тетĕп.

– Ун пек тума пулать,- терĕç халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртри аптекăра.

– Ун пек тунин усси çук. Ёçекенсем укçине пуçтараççĕ те, пĕрерĕн кĕрсе илеççĕ,- хуравларĕç Муркаш райповĕн аптекинче.

Кам татĕ çак çирĕп вăчăрана? Ёçекенсем-и? Вĕсем аçта ĕçмелли шĕвек пур, унта утаççĕ. Асăннă препарата кăларма пăрахасса кĕтмелле-и? Çак хушăра тата миçе çыннăн кун-çулĕ татăлĕ? Çак ырă утăма аптекăра ĕçлекенсемех чи малтан тăвасса шанас килет. Сывлăх хуралçисене те шанмасан, паян кама шанас?

Медицина этикинчи тĕп документа – Гиппократ тупине аса илер-ха:

– Хамăн вăйпа та, пĕлӳпе те чирлисемшĕн усă пултăр тесе тăрăшăп, сиен кӳресрен, тĕрĕсмарлăхран асăрханăп. Кирек хăш çурта кĕрсен те, эпĕ унта чирлине пулăшас тĕллевпе кĕрĕп,- тенĕ унта.

Гиппократ тупин паянхи вариантĕнче те çак шухăш тĕп вырăнта: "Çыннăн пурнăçне чунтан хисеплемеллине тĕпе хурса ĕçлĕп, чун тĕвĕленнĕ кунран пуçласах. Хама хăратсан та, хамăн пĕлӳпе эпĕ этемлĕх саккунĕсене хирĕç усă курмăп. Пурин умĕнче хам ирĕкпе тата таса чун-чĕререн çакăн пирки тупа тăватăп".

Кашни врачшăн, медицина ĕçченĕшĕн малти вырăнта пулĕ Гиппократ тупине туни.

Паян вара аптекăра туяннă "антисептин" ăна туянакансен килне кӳççулĕ, инкек илсе кĕрет. Çын кӳççулĕ çинче вара пурнăç тума каламан ватăсем. Çакна пĕлсе, курса тăрса, ку тĕлĕшпе аптекăсенче тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвасса шанас килет. Ыр кăмăллăхпа чунлăха рынок хутшăнăвĕнчи "тупăш" ăнлавран çӳлерех курасса... Тĕслĕх илме инçех каймалла мар вĕт. 13-номерлĕ аптекăра çӳлерех асăннă препарата сутнине пĕрре те курман.

Телейлĕ ачасен йышне пĕр ача хушăнсан та, пĕр çемьере харкашу чарăнсан та, тем пекех пулĕччĕ çакăн хыççăн. Ун чух, тен, калаçу пуçламăшĕнчи арçын ача та ӳсĕр амăшне курса кӳççульпе çăвăнмĕччĕ. Çав 10 тенкĕпех амăшĕ 2 мороженăй илсе пани те уншăн малтанлăха тем пысăкăш телей пулнă пулĕччĕ.

Иккĕленместĕп, пĕрре кăна пулмĕ çакăн пек тĕслĕх. Сывă ачан телейлĕ кулличчен хакли кашни тухтăршăнах хаклă. Аптекăсене ертсе пыракансен чун-чĕринче çынна юратаслăхпа ăшпиллĕх иксĕлми пулни пирки те иккĕленес килмест. Çаплах пултăрччĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

### Ырă пулăм

## Ача усрама илсен

Паян пурнăç йывăр, теме хăнăхнă ĕнтĕ эпир. Анчах хăçан çăмăл пулнăши вăл? Ырă çынсемпе юнашарах усаллисем пулнă. Ырă çынсем, Иван Христофоров шăрантаракан юрăри пек каласан, тем тесен те, нумайрах. Хăвăрах шухăшласа пăхăр. Тĕрлĕ инкек-синкексене пула паян миçе ача хăр тăлăха тăрса юлать? Ашшĕ-амăшĕ тĕрĕс-тĕкел çĕртех вĕсен чун-чĕре ăшшисĕр юлнă хĕрачасемпе арçын ачасем тата мĕн чухлĕ?

Çав ачасене интерната ямасăр, çемьере ашшĕ-амăш юратăвĕпе çитĕнтерме майсем пур. Чи пĕрремĕш мел вăл – ачана усрава илесси. Кун пек чухне усрава илнĕ ачасем те хăвăр ачасемпе танлашаççĕ. Иккĕмĕш мел – ачасене опекăна илме пулать. Виççĕмĕш мел – усрав çемье. Опекăна тăвансен ачисене илеççĕ пулсассăн, усрав çемье ют ачана усрама илет. Тепĕр уйрăмлăх: патшалăх тăлăх е хӳтлĕхсĕр юлнă ачасене çывăх çыннисем çине хунă май вĕсене тумлантарма тата çитерме укçа уйăрать. Унăн сумми мĕн чухлĕ пуласси ача миçе çулта пулнинчен килет. Усрав çемьери ачана тăхăнтартма тата ун валли апат-çимĕç илме укçа панипе пĕрлех, ашшĕ-амăш пулса тăнисене ĕç укçи те тӳлет. Ёç укçи миçе тенкĕпе танлашасси миçе ачана усрама илнинчен килет.

Пирĕн районта 55ĕн 77 ачан опекунĕсем пулса тăраççĕ. Çавăн пекех ачасене усрава илнисем те пур: 30 çемье.

Çак кунсенче районта пĕрремĕш усрав çемье çуралчĕ. Хăйсем çуратнă ачисене пурнăç çулĕ çине кăларнă ашшĕпе амăшĕ 2 çултан иртнĕ ют ачана усрама илчĕç.

Эппин, ыр кăмăллăхăн вĕçĕ-хĕрри çук. Çак ырă утăма тума нихăçан та кая мар. Çемьере ача куллинчен, унăн шăкăл-шăкăл калаçăвĕнчен ырри мĕн пултăр?

**Л. ПЕТРОВА.**

### Ёненекенсене пĕлме

## Вăл Христоса тĕне кĕртнĕ

Мускав тата Раççей Патриархĕ II Алексий пил панипе кĕçех, çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче, Чăваш Республикин тĕп хулине Мускавран Çӳлти Аслă Хăватăмăра ёненекенсен тепĕр сăваплă – Христос умĕн килнĕ Иоанн Предтеча, Турра Иордан шывĕнче тĕне кĕртнĕ пророкăн типмен алли килсе çитмелле. Шупашкарта вăл икĕ талăк пулать. Аэропортран ăна Введени соборне çурран утса йăтса çитерме палăртнă. Епархи управленийĕн пресс-секретарĕ Сергий атте пĕлтернĕ тăрăх, Иоанн пророкăн аллине тĕп храма вырнаçтараççĕ, ун патне пуç тайма килекенсене талăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те пĕр чарусăр кĕртеççĕ. Иккĕмĕш талăкĕнче ăна çав майпах Екатеринбург хулине ăсатаççĕ.

Чăннипе çветтуй çул çӳревĕн малтанхи маршрутĕнче ăна Шупашкара илсе çитерме пăхман, анчах Югослави патшалăхĕнчен пайланса тепĕр çĕнĕ çĕршыв пулса тăнă Черногори сербĕсем (вĕсен Чăваш Енри диаспори) çине тăнипе сăваплă алă (вăл шăпах çак çĕршыври мăнастирте упранать) çулне пирĕн республикăна "пăрнă". Епархи управленийĕ Йошкар-Оларан, Чĕмпĕртен тата Атăлçи регионĕнчи ытти хулапа хутлăхран Турра ёненекенсем нумай килессе кĕтет. Паллах, тăван республикăмăртан та сахал мар пулĕç унта.

### Пĕлтерӳсем. Объявления

## Тав тăватăп

Кăçал майăн 3-мĕшĕнче ман хуçалăхра пушар пулчĕ. "Оринино" (шоферĕ Г.П. Курбанов), "Свобода" хуçалăхсен, Муркашри пушар чаçĕн машинисем тата Пăсăрман ялĕн çыннисем тăрăшнипе инкеке малалла сарăлма памарĕç. Маншăн пысăк çухатăва чарса лартнăшăн вĕсене пурне те чĕререн тав тăватăп.

**Е.В. ОСИПОВА, Пăсăрман ялĕнчи пенсионерка.**

**Продаю двухэтажную дачную дачу в к/с «Дубрава», 9 км от с. Моргауши в сторону Малиновки, 6 соток, плодовые насаждения.**
**Тел.: 269-378 (г. Чебоксары) или 60-165 (с. Моргауши).**

**Ремонт тракторов ДТ-75, узлов и агрегатов (трансмиссий, реверса и т. д.).**
**Имеется обменный фонд.**
**Реализация а/м ГАЗ-52; 53, прицепов и рам а/м КАМАЗ, МАЗ, редуктора с/х машины.**
**Обращаться: ГУП ЭОЗ «Цивильскхмельмаш».**
**г. Цивильск, ул. Николаева, 8.**
**Тел.: (8-245)21-3-10; 21-3-16.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Вячеслав Михайлович**
**ЧАПЛИН**
водитель сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-гл. редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 2,0 п. листа.
Тираж 3530.
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 15.06.2006 г.
Заказ 1483
Дежурный по номеру СУВОРОВА О.Ф.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыш - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.